АСЛĂ ĂРУ ÇЫРАВÇИСЕМ

# ТĂВАН СĂМАХ ЕШĔЛЛĔХĔ, УН ӲСĔМЛĔ ЕНТЕШЛĔХĔ

ÇАПЛА калама пулать 90-ран иртнĕ чăваш халăх поэчĕ Ваçлей Давыдов-Анатри пирки. Вăл тăван литературăн аталанăвĕн кашни тапхăрĕнче хăйне евĕрлĕ сас пама тăрăшнă. Пĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартатăп. 1959 çул. Май уйăхĕн кунĕ. Советсен çуртне хирĕç ларакан кĕнеке лавкки умне чăваш çыравçисен пĕр ушкăнĕ уяв ирттерме тухнă. Кунтах Ваçлей Давыдов-Анатри те пур. Ҫӳллĕ, тĕреклĕ çын. Эпĕ ăна уяв ячĕпе пичетленсе тухнă “Çамрăк коммунист” хаçат тыттаратăп. Унта пичетленнĕ плакачĕ те, сăвви те хамăнччĕ. Вулать Василий Иванович, хаваслăн кулкаласа илет.

– Çамрăксем хăйне евĕрлĕ кĕвĕллĕ виçе шыраççĕ. Çакă савăнтарать, – тет.

Василий Иванович сасăпа вуласа сăвă кĕвĕлĕхне тĕпчет.

Чечекпе чӳхенет ĕмĕр çамрăк уяв:
çын тухать урама, симĕсленнĕ уя...
Çĕр илемĕ хĕвел вăййипе илĕртет:
Çитрĕ Çу!
Янăравлă тĕнче ал çупса хĕпĕртет:
ирĕк Çу!

Эпĕ, 22 çулти çамрăк, ку вăхăтра Шупашкар ӳнер училищинче вĕренеттĕм...

Паянхи кун, тăван литература малашлăхĕ çинчен час-часах ӳрĕк-сӳрĕк калаçусемпе çырлахса пурăннă вăхăтра, тĕлсĕр тĕрлĕ шухăш аптратать. Çапах та алă усса ларас килмест. Сăмахран, Иосиф Кобзон юрăç искусство ĕçченне наркоманпа танлаштарать пулсан – мĕн тăвăн – ирĕксĕрех килĕшме лекет унпа. Хамăр хăнăхнă тивĕçе епле йывăр пулсан та çӳле çĕклес килет. Çакна Василий Ивановичăн ĕç пӳлĕмĕнче лайăх туйса илтĕм. Ĕçлет-ха 91 çула кайнă Чăваш халăх поэчĕ. Хăйĕн вырăсла куçарнă халал сăввисене, Михаил Шолоховпа тата Корней Чуковскипе тĕл пулса калаçнă манăçми вăхăт, ас тăвăм ӳкерчĕкĕсенче сăнарласа хăварма тăрăшать. Шӳтлет, кулать, сăвăç чунĕпе пурăнать. Тĕрлĕ халăх çыравçисемпе тĕл пулса калаçнă самантсем халĕ те сăвăç асĕнче чĕрĕ ӳкерчĕксемпе, сăнсемпе ытарлă тĕнчепе пурăнаççĕ. Ваçлей Давыдов-Анатри – аслă ăру çынни – тĕрлĕ жанрпа ĕçлет. Кунтах Çеçпĕл Мишшипе Митта Ваçлейĕ çинчен тулли кăмăлпа çырнă ас тăвăм повеçĕсем хăйсен сăнарлă чĕлхипе кăмăла çĕклеççĕ, иртсе кайнă ĕмĕр чăнлăхне туллин курма пулăшаççĕ. Ача-пăча литературипе те нумай ĕçленĕ поэт. Унăн кĕнекисем чăвашла та, вырăсла та пысăк тиражпа пичетленсе тухнă. Вулама çăмăл, çĕкленӳллĕ, уçă кăмăллă ача-пăча кĕнекисем паянхи кун та чĕрĕ, илĕртӳллĕ. Анчах чи çунатлă ăсталăхĕ унăн нумай-нумай юрринче хăват илнĕ. Вăл юрăсене пирĕн ӳсĕм лайăх ас тăвать. Поэт сăвă-юрă кĕвĕлĕхне лайăх туйса-сиссе пысăк ăсталăхпа çырма тăрăшнă, хăйĕн чун-хавалĕпе çул уçнă тăван çырулăхра. Поэтăн сатира вучĕпе хĕмленсе çырнă сăвă-юрă та сахал мар.

“Чеменпе Мерчен” поэма авторĕ ăста куçаруçă пулнине те палăртса хăварасшăн. Акă ман алăра Хусанта тухса тăракан “Сăвар” чăваш хаçачĕ. /03.11.1995/. Ку номерте Чăваш халăх поэчĕ В.И.Давыдов-Анатри çырса кăларнă ас тăвăм ӳкерчĕкĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Куçарăвĕсем те пур: Муса



Джалиль, Шаукат Талиев, Махмуд Хусаин сăввисем чăвашла уçăмлăн та хитре янраççĕ. Вĕсене куçараканĕ – Василий Иванович Давыдов-Анатри. Тĕслĕхшĕн Муса Джалилĕн “Юлашки юррăм” сăвви чăвашла епле янранине çеç вуласа пăхар.

Илемлĕ эс, тĕнчемĕр!
Хĕвел – çӳл тӳпере.
Эп çеç хĕн-хур тӳсетĕп
Сĕм тĕксĕм тĕрмере.
Вĕçсе çӳрет чĕкеçĕм
Шур пĕлĕт хушшинче.
Эп пур – çунать чĕреçĕм
Пĕр вилĕм аллинче.
Хитре ӳсет чечекĕм, –
Çут сывлăм ун çинче.
Эп пур – çаплах типетĕп
Фашизм тĕрминче.
Эх, Пурăнăç! Пĕлетĕп:
Эс маншăн – чи хакли.
Сыв пул, Çĕршыв, вилетĕп, –
Çак юррăм юлашки.

Хурлăхлă кĕвĕ. Тӳрех чĕрене касса татать...

... Пĕлтĕр кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕнче К.Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче В.И.Давыдов-Анатри 90 çул тултарнине паллă турĕç. Чăваш халăх поэчĕн вăрăм та пархатарлă çул-йĕрне, унăн тĕрлĕ енлĕ ӳсĕмне пысăк хак пачĕç. Çак вăхăт тĕлне эпĕ те шӳтлĕ сăвă халалласа çырнăччĕ.

Анчах та вуласа пама тӳр килмерĕ. Апла пулин те “Давыдов-Анатри” епле çурални çинчен тăван литература “шур сухалĕ” çапла ăнлантарса пачĕ.

– Мана пĕрмаях “Давыдов хушаматлă поэтсем вырăссен те пур-çке, мĕншĕн пăтранмалла вулаканăн? Ав, сана вырăсла та пичетлесе кăлараççĕ. Вырăссен Денис Давыдов поэчĕ Пушкин саманинчех тĕпĕртеттерсе çӳренĕ. Туп хушма ят!” тетчĕç. Ак вара çак çитменлĕхе тăрăшсах пĕтерме лекрĕ. “Давыдов-Анатри” пулса тăтăм...

“Кая юлсан каю шăтать”, теççĕ чăвашсем. Çавăнпа та хамăн шухăшкăмăла пĕтĕçтерсе чăваш вулаканĕ темиçе теçетке çул пĕлсе тăракан халăх поэтне çакнашкал сăвăлла хушăмпа саламлас терĕм. Унăн пултарулăхне тата вăрăм ĕмĕрне пĕтĕм кăмăлпа сума суса çырнăччĕ:

Денис Давыдов мар пулин те
Ютпа вăл калаçман йăваш.
Çырулăхра кам-кам юлмин те –
вăл пур. Ас ту çакна, “măш-маш!”

Ваçлей Давыдов-Анатришĕн
Ас тăвăм хумĕ чупмаллах.
Унпа тăван çырулăх йышĕ
паян та ăнтăлать мала.

Ваçлей Иванч! Эс Тăхăр Вуннă
шутне çитернĕ ĕмĕре
çырулăх арчине халь хунă –
çын ĕмĕрĕ килет пĕрре.

Эс Миттапа та хурăнташлă
пулни çинчен çӳрет хыпар.
“Тăван çырулăхăн аслашшĕ
эс çеç паян!” – татса калар.

Сан сăнупа Алка, Артемьев,
кăра Агаков, Хусанкай
ас тăвăмра хускатĕç тема –
çакна та калăп сăмах май.

Хăш чух Кăлкан та курăнкалĕ
е тухĕ шăл йĕрен Ухсай.
Кашни çыравçă тĕрлĕ калăп
çăпатипе çӳрет чупса.

Чее Эсхелĕн шӳт-сăмахĕ
сан урлă сасă памасан
тăван çырулăхăн ахахĕ
йӳнелмĕ-ши? Ан яр асран.

Пĕрне-пĕри хальхаççăн маннă,
Чăл-пар саланнă кĕтӳре
хăçан сас пĕрлĕхне, тăванăм,
тупса тухайăпăр тӳрре?

Тен, хăш-пĕри пуçне те пăрĕ:
ытла хивре танлаштару.
Йĕрлер ăраскала хут тăрăх:
“Мĕнле пулать лару-тăру?”

Ухсай чĕлхи те саламатлă –
пĕрре – çулла, тепре – сив хĕл.
Тӳлек Иванова кам ятлĕ?
Сăмахĕпе вăл пенĕ тĕл.

Хăв тус-йышна та эсĕ çивĕч
куçпа тĕпчен тахçантанпах.
Тӳрех калам: çак аслă тивĕç
пурне те тивĕçмест паллах.

Айхи те ыр сăмах каланă
сăпайлăхна шута илсе.
Вăлах чăвашлăхна хак панă
хисеплесе, хĕпĕртесе.

Апла пулсан Денис Давыдов
ĕмĕлкине хăваласа
чупах, чупах. Тем тĕрлĕ тытăм
итлетĕр анатри сасса.

Ача-пăча вулатăр хӳхĕм
сăввусене хаваслanса.
Сапать паян та сан чĕлхӳ хĕм
çулсен йывăрăшне манса.

**Николай ТЕВЕТКЕЛ,**
**ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Митта Ваçлейĕ премийĕн лауреачĕ**